**Малта пыраканăн ĕç опычĕпе паллашатпăр**

# Тăрăшуллă ĕç йĕркелĕвĕ – ăнăçу никĕсĕ

*Çу кунĕ выляттарать те хĕл кунĕ çирĕп ыйтать. Çак пурнăç чăнлăхне ĕç ĕмĕрне çĕр ĕçĕпе çыхăнтарнă хресчен самантлăха та манăçа кăлармасть. Ваттисен сăмахĕнчен те палăрать çакă: мĕн акатăн – çав шăтать, чĕпсене кĕркунне шутлаççĕ, хирти пӳлмери мар т. ыт. те. Урамра паян кĕркунне. Кĕр кунĕсем епле килесси çулла мĕн чуль тар юхтарнипе тӳремменех çыхăннă. Çавăнпа та çу кунĕсенче кам хӳре вĕçне туй килессе кĕтмесĕр ĕçленĕ – вĕсем паян ĕç тулăхĕпе киленсе канайраççĕ, лăпкă лару-тăрура малашлăх планĕсене палăртайраççĕ. Эпĕ пыракан хуçалăхра урăхла шухăш-ĕмĕт çуккине ăнланса “Восток” ял хуçалăх производство кооперативĕн ертӳçин алăкĕнчен тулли кăмăлпа шаккарăм. Кăнтăр вăхăчĕччĕ пулсан та, хуçалăх ĕçĕ-хĕлĕшĕн канăçне çухатса тимлекен Михаил Николаевич Шишокина канура тесе калаймăн. “Самантлăх çемçелӳ тӳрех çухатăва çаврăннине курса-ăнланса тăратăп. Çак чăнлăха хуçалăх ĕçченĕсен ăнланăвне те çитертĕмĕр. Çавăнпа та паян пирĕн уй-хир ĕçĕсем пĕтĕмпех вĕçленнине пăхмасăрах нихăш отрасльте те ĕç чарăнса ларнине кураймастăр”, – терĕ председатель телефонпа уйра çутă юпи кăларакансем кĕрхи культурăсене таптанине пĕлтернине итленĕ хыççăн хресчен ĕçĕ çине суракансем çине вĕчĕрхенсе. Тăхăр çул ертсе пырать вăл асăннă хуçалăха, тăхăр çул “Восток” кооператив ĕç ăнăçăвĕпе малтисен ретĕнче. Тыр-пул уявĕ умĕн эпир председательпе кăçалхи ял хуçалăх çулĕн ку таранчченхи ĕçĕсене пăхса тухрăмăр.*



**– Михаил Николаевич, Тыр-пул уявĕ – хресчен уявĕ. Çавăнпа та, пĕлес килет, Мулкачкассинчи çĕр ĕçченĕсем çак куна мĕнле ӳсĕмсемпе кĕтсе илеççĕ?**

– Уяв кĕреки умĕнче туса çитерейменшĕн ĕçсемшĕн пуç усса тăма аван мар. Çакна пирĕн хуçалăх пĕлнĕ, пĕлет, пĕлĕ те. Çавăнпа та хуçалăхра кашни ĕçех агротехникăпа палăртнă вăхăтра пурнăçлассишĕн тăрăшатпăр, çакă тухăç никĕсĕ пулнине кашни ăнланса тăратпăр. Уяв умĕнхи ӳсĕмсем пирки калас пулсан, Пукрав ăшши тытнă ĕнтĕ эпир. Çакна валли октябрь пуçламăшĕнчех уй-хир ĕçĕсене вĕçлесе унта кĕрхи ĕçсене хутшăннă ял хуçалăх техникине машинăпа трактор паркне кĕртсе лартрăмăр. Ӳсĕмсем тенĕрен, пĕрлехи тимлĕхпе тата техникăна тухăçлă ĕçлеттернипе 365 гектар çинче ӳстернĕ тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсенчен пĕр гектар пуçне вăтамран 21,5 центнер тухăç илтĕмĕр. 20 гектар çинчи çĕр улми, çу каçа агротехникăна пăхăнса пăхса ӳстернĕрен, гектар пуçне 224,8 центнер, 8,5 гектар çинче ӳстернĕ выльăх кăшманĕ гектартан 583 центнер тухăç пачĕç. Апат-çимĕç кăшманне вара пĕр гектар çинчен кăна 338,8 центнер пухса кĕртрĕмĕр. Кусемсĕр пуçне обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли 314 тонна паха утă, 226 тонна улăм, 1388 тонна силос янтăларăмăр. Çак апат выльăх-чĕрлĕхе тĕрĕс-тĕкел хĕл каçарма, продукци илессине чакармасăр ĕçлеме çитессе шанатпăр.

**– Куратпăр, ĕçлесен пĕчĕк вăйпах пысăк çĕклем илме пулать. Çакăнта ĕçе пĕлсе йĕркелени малти вырăнта тăнăн туйăнать мана. Хирĕçлеместĕр пулĕ?**

– Нумай пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçине хумхантаракан ыйтăва хускатрăр. Сирĕн ыйтăвăр никĕсĕнче тĕрĕслĕх те пур. Паян тĕрлĕ наци проекчĕсем пирки, çĕнĕрен çĕнĕ технологисем çинчен сăмахлаççĕ. Анчах хăш-пĕр çĕртисĕр пуçне ĕç малалла туххăмрах кайни курăнмасть. Ĕçсене вырăнта йĕркелемесен, халăхпа çывăх ĕçлемесен, нимĕнле çĕнĕлĕх те малалла каймĕ.

**– Кунта хăвăр сăмахăрсене хуçалăхри тĕслĕхсемпе çирĕплетсе памăр-ши?**

– Калатăп. Октябрь уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлнех эпир вырмана та, çĕр улми кăларассине те, выльăх кăшманне пухса кĕртессине те, кĕрхи çĕртме сухи тăвассине те вĕçлерĕмĕр. Паянхи ăшă кунсемпе пирĕн ятарласа йĕркеленĕ слесарьсен бригади сӳресене çитес çур аки валли юсама пуçларĕ. Выльăхсем витене кĕнĕ май вĕсене кулленех симĕс масса çулса çитересси пырать. Ĕç условийĕсене ултавсăр тунăран вырмара механизаторсемпе водительсем, уй-хир ĕçченĕсем пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. Виçĕ “хир карапĕнчен” В. Дмитриевпа В. Игнатьев экипажĕ хастартарах пулчĕ, 271 тонна çĕнĕ тырă çапса илме хевте çитерчĕ. Хиртен йĕтем çине тырă турттарнă çĕрте Алексей Иванов водитель палăрчĕ (428,3 тонна). Виталий Иванов та кĕске хушăра 260 тонна тырă турттарма ĕлкĕрчĕ. Улăма пуçтарса урана хывса пырасси те комбайнсем хыççăнах пулса пычĕ. Кунта Александр Пушкинпа Алексей Артемьев механизаторсемпе пĕрле улăм çине ятарласа çирĕплетнĕ бригада хастарлăх кăтартрĕ. Кунта малаллах кĕрсе кайиччен çакна та каласа хăварам. Вырмара кашни ĕçрех çирĕплетнĕ яваплă çын пулнă. Вĕсен хăйсен ĕç условийĕсем. Вĕсенчен çирĕп ыйтсах тăни ĕç пахалăхĕпе хăвăртлăхĕ çине витĕм кӳчĕ те ĕнтĕ. Вырмара ĕçе вăхăт çине пăхса мар, ĕç пултăр тесе ĕçлерĕмĕр. Çакă çанталăк условийĕсенчен вăйлăрах пулчĕ пулас: ĕçсем вăхăтра пурнăçланчĕç, пахалăх уксахламарĕ. Тепĕр хут конкретлăлатса калатăп: сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вырма ĕçĕсене вĕçлерĕмĕр, октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вара хирти пур ĕçе те пуçтартăмăр. Уйрăммăн илсен, пĕлтĕр кĕрхи культурăсене 70 гектар акса хăварнă пулсан, вĕсен вăтам тухăçĕ 31 центнер пулнине шутласа, кăçал вĕсене 103 гектар акса хăвартăмăр. Çĕртме сухи пĕлтĕр çителĕксĕртерех туни тухăç çинче палăрнине шута илсе кăçал октябрьчченех ку ĕçе пĕтĕм лаптăк çинче пурнăçларăмăр. Çĕртме сухинче Сергей Семеновпа Сергей Наумов (кăçалхи Президент стипендиачĕ) механизаторсем тăрăшуллă пулчĕç.




**Кĕрхи ĕçсем вĕçленнĕ май хуçалăхра çитес çур акине хатĕрленес ĕçсем пуçланнă ĕнтĕ. Николай Николаев, Вячеслав Андреев, Владислав Михайлов слесарьсем (сулахайран сылтăмалла) сӳресем юсас ĕçе тепĕр 10 кунтан вĕçлеме шантараççĕ. “Ĕçе вăрăма тăснинчен усси çук. Ĕç укçи пирĕн çавăнта”, – терĕ ĕçрен уйрăлмасăр В. Андреев.**

**– Çĕр улми пуссинче те сирĕн çĕнĕ шухăшлав курăнать.**

– Пĕр вырăнта тăмастпăр. Кунта паха вăрлăх малти вырăнта пулмаллине ăнланса кăçал Комсомольски районĕнчи “Слава картофелю”агрофирмăран 2 гектар лартмалăх икĕ тĕслĕ çĕнĕ сорт туянса килтĕмĕр. Мĕн тетĕр, 181 центнер тухăç пачĕç вĕсем. Çитес çул çак вăрлăх çĕр улми пуссин тĕп пайне йышăнĕ. Çĕр улми кăларнă çĕрте пире шкул ачисем пысăк тĕкĕ пачĕç. Орининти, Калайкассинчи, Москакассинчи вăтам шкул ачисем вăй хучĕç унта. А. Артемьевпа С. Пушкин механизаторсем копалкăсемпе, В. Пушкинпа В. Иванов тата А. Иванов водительсем автомашинăсемпе хирте ĕçе самант та чарса тăмарĕç.

**– Михаил Николаевич, эсир шкул ачисемпе тачă çыхăну тытни те хуçалăхри ĕçсене кайри рете хăварма памасть пулас?**

– Çĕр çинче пурăнакан çĕр ĕçĕнчен ютшăнмалла мар. Шкул ачисем пире пулăшаççĕ, эпир – вĕсене. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç, теççĕ-и-ха чăвашсем. Мĕншĕн-ха пăрăнас вĕсенчен? Эпир пăрăнмастпăр. Акă, тивĕçлĕ тӳлев условийĕсем туса панăран кăçал пирĕн 8,5 гектар çинчи выльăх кăшманне тата пĕр гектар йышăннă хĕрлĕ кăшмана 5 шкул пăхса ӳстерсе пачĕ. Вĕсен ĕçĕн тухăçĕ те паян пире савăнтарать: выльăх кăшманĕ гектар пуçне 583 центнер тухăç пачĕ пулсан, хĕрлĕ кăшман – 338,8 центнер. Çак тухăçăн пĕтĕм вăрттăнлăхĕ – ĕçсене вăхăтра пурнăçлани. Ку пусăсене малтан тислĕк тăкса сухалани, акара тата калча ӳснĕ вăхăтра минераллă удобренисемпе ĕçлени кĕркунне пысăк тухăça çаврăнчĕ те.

**– Хĕле кĕрес умĕнхи тепĕр ыйту вăл: выльăх апачĕ продуктивлăха çӳллĕ шайра тытма çителĕклĕ-и?**

– Çу кунĕсенче кун пирки шутламасăр пĕр кун та иртмерĕ. Паян вара выльăх апачĕ тĕрĕс-тĕкел хĕл каçмалăх çитетех тесе шутлатăп.

**– Çĕнĕ техника пирки те кĕскен каласа хăварăр-ха. Унсăр çакнашкал ăнăçу пулассăн туйăнмасть.**

– Кăçал çĕнĕрен МТЗ-82 тракторпа курăк çулса тиекен “Волга-2” агрегат илтĕмĕр. Çакă тĕрĕс çул пулчĕ. “Волга-2” агрегат вăхăтра çителĕклĕ силос хывса хăварма пулăшрĕ, паян та унăн пулăшăвĕпе выльăхсене симĕс курăк çулса кĕрсе çитеретпĕр. Çакнашкал ĕç çĕнĕ техника çине пăхтарать, çĕнĕ шухăшсем çуратать.

**– Паян – Уяв. Ун ячĕпе паян уйрăммăн мĕн калайратăр?**

– Манăн хамăр хуçалăхри уй-хир ĕçĕсене хутшăннă кашни ĕçчене пысăк тав сăмахĕ калас килет. Çĕре çити тайма пуç вĕсене. Уйрăм тав сăмахĕ шкул ачисемпе учительсене. Вĕсем – Орининти, Калайкассинчи, Москакассинчи вăтам тата Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсем, Муркашри лицей – пирĕнтен пысăк хисепе тивĕç. Эпир вĕсемпе хамăр тунă килĕшӳсене пăсман, пăсмастпăр та. Çавăнпа вĕсем пирĕнпе малашне те çыхăну тытасса шанса тăратăп. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси малти вырăнта пуласса кĕтетĕп.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Куравра – хуçалăх ĕçĕн кăтартăвĕ**

# Ăратлăхпа ĕçлессине тĕпе хураççĕ

Ăратлă выльăх пысăк тухăç никĕсĕ пулнине кашниех аван пĕлет. Ăна туянасси пирки “малашлăха” пăхакан хăш-пĕр ертӳçĕсемпе специалистсем “тăрăшсах калаçнине” илтсен, район самантрах аталану çулĕпе малалла сулăмлă утăм тăвасса, çав хуçалăхăн экономики те тĕрекленессе кĕтетĕн, анчах... Кун хыççăн кун, эрне, çулталăк иртет, анчах “наука вĕрентнине алла илме хатĕр” хуçалăхсем пĕр вырăнтах тапăртаттараççĕ...

Халĕ каланă сăмахсем такамшăн темĕнле пулсан та, “Оринино” ял хуçалăх производство кооперативĕшĕн мар. Хуçалăх – мăйракаллă шултра выльăхсен ăратлăхĕпе ĕçлекен репродуктор. Хăйсен ĕçне Орининсем çулленех тĕрлĕ куравсене тăратса тĕрĕслеççĕ-çирĕплетеççĕ. Маларах иртсех калам, ăнăççăр та мар. Çулленех вĕсен пушмак пăрăвĕсемпе ĕнисем призерсен шутĕнче.

Ăратлă выльăхсен куравĕ кăçал сентябрĕн 9-мĕшĕнче “Чувашское” уçă акционерсен обществинче иртрĕ. Унта пирĕн районти ăратлăх енĕпе ĕçлекен 6 хуçалăх хутшăнчĕ. Вĕсен шутĕнче “Оринино” хуçалăх та. Орининсем курава Атапайĕнчи мăйракаллă çамрăк шултра выльăхсен ферминчи виçĕ тынашкана илсе кайрĕç: 10–12 уйăхрине, 12–14 уйăхрине, 14 уйăхран аслăраххине. Кусемсĕр пуçне Патаккассинчи сĕт ферминчен пĕр ĕнене.

Атапайĕнчи мăйракаллă çамрăк шултра выльăхсен Екатерина Замкова ертсе пыракан ферма коллективĕ хăйсен умне лартнă тĕллеве ăнăçлă пурнăçласа пырать теес килет. Паянхи куна кунта çамрăк выльăхсен йышĕ 91 пуç. Ку фермăра выльăхсем тытассинче Орининсен хăйсен технологийĕ. Ферма ĕçченĕсем кунта Патаккассинчи сĕт ферминчен 6 уйăхри пăрусене илсе килеççĕ те ӳстерсе пĕтĕлентернĕ хыççăн 5-6 уйăхран Патаккассине тавăрса параççĕ.



**Ферма заведующийĕ Екатерина Замкова тата хуçалăхăн тĕп зоотехникĕ Рената Пушкова. Хуçалăхри ăратлăх ыйтăвне аталантарасси вĕсенчен те нумай килет.**

Асăннă тапхăрта кунти выльăхсене пăхас ĕçе 7 çын хутшăнать: ферма заведующийĕ, выльăх пăхакан 4 çын, 2 хурал. Пĕрлехи тăрăшулăхпа фермăри çамрăк выльăхсем çулталăк çурăна çитиччен талăкра вăтамран 650 грамм, çулталăк çурăран аслăраххисем 700 грамм ӳт хушаççĕ. Выльăхсене пăхнă çĕрте Лидия Зайцевапа Венера Блинова нумай çул ĕçлесе пуян опыт пухнă ĕнтĕ.Çамрăк мăшăрсем Тамарăпа Анатолий Максимовсем те ĕçре хастар. Ĕçе юратнипе палăрса тăраççĕ вĕсем, тăрăшулăхпа ăратлăх ĕçне малалла уттараççĕ. Çак ĕçченсем ытларах тăрăшнипех хуçалăх çуллен ăратлă выльăхсене сутлăх хатĕрлет. Çуллен 25-шер пуç. 2003 çулта 43 пуç ăратлă выльăх сутни те пулнă. Ăратлăхпа ĕçлесси мĕнле шайра пулса пынине хуçалăх çуллен куравсене хутшăнни те çирĕплетет. Акă, пĕлтĕр кунтан курава кайнă тына ылтăн медале тивĕç пулнăччĕ. Кăçал вара Орининсен икĕ тыни куравра кĕмĕл тата пăхăр медальсене тивĕçрĕç. Çакă мар-и-ха вăл ăратлăх ĕçĕ тĕрĕс çул çинче пулнине çирĕплетекенни?




**Курава кайнă Анатолий Максимов хăйне çирĕплетсе панă пушмак пăрупа куравра.**

Çав вăхăтрах Раиса Блинова ертсе пыракан Патаккассинчи сĕт ферминче 205 пуç сумалли ĕне тăрать. Çуллен çĕнелсе пыракан кĕтӳ продуктивлăха чакарманни те пĕрлехи тимлĕхре тымарланни куçкĕрет.

**А. ПЕТРОВ.**